Валери ТУРКАЙ

# Раççейĕме

Вăранать Мускав та,
вăранать Хусан та...
Шупашкар та уçрĕ
шуçăмпа куçне...
Эп сана, Раççейĕм,
ырă кун сунатăп!
Ăраскал çеç çутăр ӳлĕм сан çине!

Курасса, Раççей, эс
чăн та тем те куртăн.
Куртăн, тем те куртăн
хăв ĕмĕрӳнте.
Хăш чухне эс шухă тинĕс евĕр
пултăн,
Хăш чухне çутатрăн
тĕксĕм пĕлĕте.

Турăран писсессĕн
эс хăвна аркатрăн,
Хăв Çуртна çунтартăн
хăвăн аллупа...
Сурану, пĕлетĕп,
санăн питĕ тарăн.
Пурпĕр эс утатăн Аслă Çулупа!

Çăмăл мар пачах та халь
сана, Раççейĕм.
Анчах кам-ха йăтĕ
Санăн Хĕресне?
Шурă кăвакарчăн сансăр
епле вĕçĕ?
Кам çутатĕ сансăр
тĕксĕм тӳпене?..

Кунсерен, Раççейĕм,
вăйлăрах пулсамччĕ.
Çӳлти Турă савтăр яланах сана.
Ман çăлтăрăма эс çутăрах
тусамччĕ.
Чунăм ялан туйтăр санăн ăшшуна.

Вăранать Мускав та,
вăранать Хусан та...
Шупашкар та уçрĕ
шуçăмпа куçне...
Эп сана, Раççейĕм,
ырă кун сунатăп!
Эп ялан курасшăн эс телейлине!

***Мускав,***
***2014 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕ.***